УТВЕРЖДАЮ
Проректор БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Минобразования Чувашии

……………………Ж.В. Мурзина

«29» декабря……………2021 г.

Государственная итоговая аттестация по образовательным программам среднего общего образования в форме единого республиканского экзамена

Демонстрационный вариант
контрольных измерительных материалов
единого республиканского экзамена 2022 года
по ЧУВАШСКОМУ ЯЗЫКУ

Подготовлен кафедрой чувашского языка и литературы
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии

ЧĂВАШ ЧĔЛХИПЕ
2022 çулта тытмалли республикăн пĕрлехи экзаменĕн тĕслĕх варианчĕ

Тĕслĕх варианта ăнлантарни

Тĕслĕх варианта 11-мĕш класс пĕтерекенсене пулас экзамен тытăмĕпе тата йĕркипе паллаштарма хатĕрленĕ: экзамен ĕçĕн тытăмне ăнлантарнă, заданисен формипе шутне кăтартнă, экзамен ĕçĕсене хакламалли критерисене палăртнă. Пĕлӳ содержанийĕн элеменчĕсене çавăн пекех кодификаторта кăтартнă.

Вĕренекен валли хатĕрленĕ инструкци

Тĕрĕслевпе хаклав материалĕ 27 ĕçе пĕрлештерекен 2 пайран тăрать. Пĕрремĕш пайра – 26 ĕç, иккĕмĕш пайра – 1 ĕç.

Экзамен ĕçĕсене тума 3,5 сехет (210 минут) уйăрнă.

1-26-мĕш ĕçсен хуравĕсене цифрăпа (числопа), сăмахпа (сăмахсемпе) е цифрăсен (числосен) йĕркипе кăтартмалла. Хуравсене текстра ятарласа палăртса хăварнă вырăна çырмалла, кайран хуравсен 1-мĕш бланкне куçармалла.

КИМ — Хуравĕ: 15 — Бланк: | 1 | 5 |

Хуравĕ:

А	Ă	Б	В	Г
3	2	6	1	4

Бланк: | 3 | 2 | 6 | 1 | 4 |

Хуравĕ: илем — Бланк: | и | л | е | м |

2-мĕш пайра (27-мĕш ĕçре) вуланă текст тăрăх сочинени çыралла. Сочинени текстне хуравсен 2-мĕш бланкĕ çине çырмалла.

Хуравсене хура чернилпа çырмалла.

Ĕçсене тунă чух хуравăша (черновика) çырма юрать. **Ĕçсене хакланă чух хуравăшра тата тĕрĕслевпе хаклав материалĕсен текстĕнче çырнине шута илмеççĕ.**

Ĕçсене тунăшăн илнĕ балсене пĕрле хушаççĕ. Май килнĕ таран ытларах ĕç туса чи нумай балл пухма тăрăшăр.

Ĕçсене туса пĕтерне хыççăн кашни ĕçĕн хуравĕ хуравсен 1-2-мĕш бланкĕсенче тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине пăхса тухăр.

Ăнăçу сунатпăр сире!

1 **Текстăн тĕп информацине тĕрĕс палăртакан предложенисен номерĕсене çырăр.**

(1)К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче «Шуйттан чури» спектакль кăтартма пуçланă. (2)… Чăваш Республики Пуçлăхĕн гранчĕпе усă курса лартнă. (3)Спектакль режиссерĕ – Наталия Сергеева, художникĕ – Светлана Зверева, композиторĕ – Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Лолита Чекушкина, ташă лартаканĕ – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ Зоя Александрова.

(4)Трагедие Ухсай Яккăвĕ çемье историне тата халăх пултарулăхне тĕпе хурса çырнă. (5)Спектакле лартнă чухне пултарулăх ушкăнĕ хăйне евĕрлĕ эффектсемпе (çутăпа, сасăпа, декораципе) усă курнă, ку çамрăк ăрăва уйрăмах илĕртет, чăвашсен ĕлĕкхи пурнăçне сăнланă самантсене çĕнĕлле хаклама май парать.

1) К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕнче «Шуйттан чури» спектакль кăтартма пуçланă.

2) Спектакле Чăваш Республики Пуçлăхĕн гранчĕпе усă курса лартнă.

3) Спектакль художникĕ – Зоя Александрова.

4) Трагедие Константин Иванов çемье историне тата халăх пултарулăхне тĕпе хурса çырнă.

5) Спектакле лартнă чухне пултарулăх ушкăнĕ хăйне евĕрлĕ эффектсемпе усă курнă.

Хуравĕ: ________________________

2 **4-мĕш предложенире нумай пăнчă вырăнне шухăш тăрăх юрăхлă сăпат местоименине çырăр.**

Хуравĕ: ________________________

3 ***Пултарулăх*** **сăмахăн пĕлтерĕшĕсене çырса панă словарь статйине вулăр. Текстăн 4-мĕш предложенийĕнче *пултарулăх* сăмахăн хăш пĕлтерĕшĕпе усă курнă? Çав пĕлтерĕшпе тӳр килекен номере çырăр.**

Пултарулăх

1. Хайлас ăсталăх; çут çанталăк пани, Турă пани, талант. *Пысăк пултарулăх.*
2. Хайлас ăсталăха кăтартни; пултару ĕçĕ, творчество. *Халăх поэзийĕн, халăх сăмах пултарулăхĕн тĕп паллисем ача-пăча сăмахлăхĕнче те юлаççĕ.*

Хуравĕ: ________________________

4 **Пусăм ӳкекен уçă сасса кăтартакан сас паллине йăнăш кăтартнă сăмаха çырăр.**

ТИкĕс, тĕрĔс, тАшăçă, тӳрЕм.

Хуравĕ: ________________________

5 **Çырса панă предложенисенчен пĕринче паллă тунă сăмахпа йăнăш усă курнă. Лексика йăнăшне тӳрлетĕр, çав сăмахăн паронимне çырăр.**

Кĕçĕн мăнукăм – ТĂНĂÇСĂР ача.
Эпĕ кукăль САМСАХНЕ çиме юрататăп.
Паянхи темăна эпĕ питĕ лайăх ĂНЛАНТĂМ.
Сăмахсен пĕлтерĕшне ПĂТРАТАР мар.

Хуравĕ: ________________________

6 **Предложенире хăш сăмахпа йăнăш усă курнă? Çав сăмаха çырăр.**

Сăнаса пăхакан куçа курсан хĕр хĕрелсе каять, ватти калаçнă чух сăмаха вырăнсăр хушăнмасть.

Хуравĕ: ________________________

7 **Хăш сăмахăн формине йăнăш йĕркеленĕ? Йăнăша тӳрлетсе çав сăмаха тĕрĕс çырса парăр.**

чылай ÇЫН
САМАХСАРПА усă кур
КИМĔПЕ ярăн
пирĕн ТУСĂМĂР
сирĕн ЮЛТАШУ

Хуравĕ: ________________________

8 **Грамматика йăнăшĕсемпе вĕсем тĕл пулакан предложенисене çыхăнтарăр.**

ГРАММАТИКА ЙĂНĂШĔСЕМ	ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ
(А) япала ячĕн падеж формипе йăнăш усă курни	*(1) Пирĕн шкулта çĕр ача вĕренеççĕ.*
(Ă) япала ячĕн нумайлă хисеп формипе йăнăш усă курни	*2) Проект ĕçĕ çырас тесе эпĕ чылай сайтсене тишкерсе тухрăм.*
(Б) камăнлăх формипе йăнăш усă курни	*(3) Экзамен лайăх тытатăн, тата çĕнĕ телефон илсе памастăп.*
(В) подлежащипе сказуемăй хушшинчи çыхăнăва тĕрĕс йĕркелемении	*(4)Пирĕн пиччем Мускавра пурăнать.*
(Г) сыпăнуллă хутлă предложение тĕрĕс йĕркелемении	*5)Эпĕ час-часах электронлă сăмахсара усă куратăп.*

Сас паллисемпе тӳр килекен тĕрĕс хуравсен номерне таблицăна çырăр.

Хуравĕ:

А	Ă	Б	В	Г

9 **Хуравăн хăш варианчĕсенчи сăмахсене икĕ *ч* юнашар çырмалла?**

1) пăр..ăр, лар..ăр, тар..ăр;
2) тух..ăр, сик..ĕр, хуш..ăр;
3) ташла..ăр, парнеле..ĕр, шутла..ăр;
4) пĕл..ĕр, тух..ăр, çăт..чăр;
5) кай..ăр, пĕлтер..ĕр, хăтар..ăр.

Хуравĕ: ________________________

10 **Кашни сăмахĕнчех çемçелĕх палли сиксе юлнă хурав варианчĕн номерĕсене çырăр.**

1) мăкăн.., выл..ăх, хал..хи;

2) пĕлĕт.., тикĕт.., кĕт..;
3) мăр..е, стат..я, кĕс..е;
4) вĕренет.., кĕрет.., чĕрет..;
5) ахал..ех, хал..ех, килĕр..ех.

Хуравĕ: ______________________

11 **Нумай пăнчă вырăнне вăрăм хупă сасса палăртакан сас паллисене хуравăн хăш варианчĕсенче çырмалла?**

1) тĕ..ĕм кас, вăр..ăн çул, па..ăр каччă;
2) и...ĕ кала, ви..ĕ виç, пĕ..е тух;
3) и..ĕ хĕр, çи..ĕ хут кала, ву..ă пус;
4) тĕ..ĕм тух, шалалла ир..ĕр, вăй па..ăр;
5) ă..ăн калаç, чăрăш тă...и, си..ĕн пăх.

Хуравĕ: ______________________

12 **Нумай пăнчă вырăнне икĕ *л* юнашар хуравăн хăш варианчĕсенче çырмалла?**

1) шĕшкĕ..ĕх, хурăн..ăх, çӳçе..ĕх;
2) курнăçу..ă, хăю..ă, пăхăну..ă;
3) илем..ĕ, хастар..ă, типтер..ĕ;
4) юрă..ă, ташă..ă, кĕвĕ..ĕ;
5) илем..ĕх, çыру..ăх, куç..ăх.

Хуравĕ: ______________________

13 **Нумай пăнчă вырăнне *ы* сас палли хуравăн хăш варианчĕсенче çырмалла?**

1) ç..лĕм, ç..л, ç..вĕт;
2) ç..рма, ç..рла, ç..ру;
3) ç..п, ç..рĕп, ç..мĕç;
4) ч..р, ч..пер, ч..кĕ;
5) ç..хă, ç..ран, ç..рă.

Хуравĕ: ______________________

14 **Палăртнă сăмахсене пысăк сас паллинчен пуçласа хуравăн хăш варианчĕсенче çырмалла?**

1) «НУРĂС» лавкка, «САМАНТ» журнал, «ТАНЯ» поэма ;
2) «Хурçă ШАНЧĂК» сăвă, «Симĕс ЫЛТĂН» повесть, «Хĕн-хур АЙĔНЧЕ» поэма;
3) Левентей КӲЛЛИ, Варринчи УРАМ, Качака ÇЫРМИ;
4) САР шывĕ, АТĂЛ шывĕ, ХИРЛЕП шывĕ;
5) В.И. Дaвыдов-АНАТРИ, Т.С. Максимова-КОШКИНСКАЯ, В.И. Краснов-АСЛИ.

Хуравĕ: ______________________

15 **Дефиспа хуравăн хăш варианчĕсенчи сăмахсене çырмалла?**

1) куç хупанки, кил карти, чӳрече куçĕ;
2) çутă кăвак, йăмăх хĕрлĕ, тĕттĕм симĕс;
3) атте анне, апат çимĕç, аш какай;
4) лару тăру, паян ыран, хăш пĕр;

5) кукша пуç, чĕкеç хупаххи, утмăл турат.

Хуравĕ: ______________________

16 **Запятой хуравăн хăш варианчĕсенчи предложенисенче лартмалла?**

1) Вăл кăнтăрла çывăрать е Атăл хĕррине анать.
2) Палан хĕрлĕ анчах йӳçĕ.
3) Йăмăк ман çине пăхса илчĕ те кулса ячĕ.
4) Çил-тăман пуçланчĕ те çанталăк ăшăтрĕ.
5) Чăваш тĕрри пуян та илемлĕ.

Хуравĕ: ______________________

17 **Запятой лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.**

Юратнă кĕтесĕм (1) çамрăклăх тиллерĕ (2) ĕçе хăнăхтарчĕ (3) ĕçре пиçĕхтерчĕ (4) пурнăç сукмакĕ çине (5) кăларчĕ.

Хуравĕ: ______________________

18 **Запятой лартмалли вырăнсене кăтартакан цифрăсене çырăр.**

Микка(1) ялан(2) чир-чĕрпе асапланаканскер (3) пит имшеркке (4)ӳсет.

Хуравĕ: ______________________

19 **Запятой лартмалли вырăна (-сене) кăтартакан цифрăсене çырăр.**

Валентин (1) паян калама çук телейлĕ (2) мĕншĕн тесен (3) пĕрремĕшĕнчен (4) вăл халĕ çак ирĕклĕ çĕр çинче (5) иккĕмĕшĕнчен (6) хăйĕн юратнă ĕçне (7) тума пултарать.

Хуравĕ: ______________________

20 **Запятой лартмалли вырăна (-сене) кăтартакан цифрăсене çырăр.**

Левенĕн (1) вăрăм пӳрнисем (2) клавишсем тăрăх (3) пĕрре питĕ хăвăрт (4) вĕлтĕртетсе чупаççĕ(5) тепре вăл вăраххăн (6) меллĕн (7) темиçе аккорд илсе (8) харăс-харăс пусать.

Хуравĕ: ______________________

21 **Пĕр пунктуаци правилипех тире лартнă предложенисене кăтартакан цифрăсене çырăр.**

(1)Йăмра ялта ӳсет, çирĕк – çырмара. (2)Йĕри-тавралла çаврăнса пăхрăм – никама та курмарăм. (3)Урамра, пахчасенче, картишĕнче – пур çĕрте те йывăç. (4)Асатте кил хушши тытать, асанне – пӳрт ăшши. (5)«Кам унта?» – илтĕнчĕ пӳртрен сасă.

Хуравĕ: ______________________

Текста вуласа тухăр та 22-27-мĕш ĕçсене тăвăр.

(1)Чăвашра сĕм авалтанпах илемлĕ те ăслă сăмах çӳренĕ: „Аккам çук та, акам пур“.

(2)Акамлăх – тахçанхи йăла. (3)Вун иккĕри-вун виççĕри хĕр ачасем пĕр-пĕринпе ĕмĕр туслă пулма сăмах татнă. (4)Патшалăх пуçлăхĕсем килĕшӳ тунă чухнехи пек, пĕчĕк хĕрсем хăйне евĕр тупа тунă.

(5)Авалхи хăмла ăстисен йăхĕнчен тухнă чăваш хĕрĕсем шыв юххине хăмла пăрахнă та каланă: „Хăмла шывра путсан пирĕн туслăх та шывпа юхтăр, пĕттĕр“. (6)Тӳлек шыва шур чул ывăтнă та каланă: „Шур чул хуралса шывран ишсе тухсан пирĕн туслăх шыва кайтăр, çиелте çӳретĕр, хамăра та çăмăлттай пулма пӳртĕр...“ (7)Хăмла шывра путман. (8)Туслăх ĕмĕрлĕхе пынă. (9)Шур чул хуралман, ишсе те тухман. (10)Çыран хĕрне юхса тухсан вăл чула урăх хĕр ачасем тупа туса тата шаларах ывăтнă. (11)Акамсем пĕр тăван йĕкĕрешсем пек пулнă. (12)Вĕсем пĕр тĕрĕ тĕрленĕ, пĕр евĕр тутăр çыхнă, пĕрешкел кĕпе тăхăннă, тутăрне те пĕр евĕрех çавăрса çыхнă. (13)Ташăра пĕрле ташланă, вăййăра пĕрле юрланă. (14)Туйра акамĕ хĕр çумĕ пулнă.

(15)Хĕрĕн аккăшĕ пулмасан питех кулянман: акамăшĕ пур. (16)Акамсен ачисем те, ачисен ачисем те амăшĕсемпе асламăшĕсем акамлă пулнине асра тытнă, хăйсем те пĕр-пĕринпе хурăнташлансах кайнă.

(17)Хăш-пĕр çĕрти чăвашсем *акам* сăмаха пĕлмеççĕ. (18)Ун вырăнне *çырлам* е *силĕм* текенни те пур. (19)Хитре те хӳхĕм сăмахсем. (20)*Силĕм* – пит авалхи сăмах. (21)*Çырлам* сăмах хăй мĕне тăрать! (22)Çырла çупкăмĕнчи пек пĕрле пулмаллине те пĕлтерет вăл.

(23)Тупа йăли паян куншăн та хаклă. (24)Туслăх – пурнăçра чи кирли, чи асли. (25)Аваллăх сăмахĕсене мансан та йăлана кĕнĕ туслăх чĕререх юлтăр.

(26)Çапла, халăхăмăр авалтанпах туслă пурăнма пĕлнĕ. (27)Эпир – çак халăх ачисем, унăн ăшĕнчи тĕпренчĕксем. (28)Ялан пĕрле эпир. (29)Пайлаймĕ пире никам та. (30)Нихçан та. (31)Пирĕн туслăх хăватлă. (32)Туслашас енĕпе пирĕн авалхи мăн асаттесенчен юлас марччĕ. *(Г. Волков.)*

***Геннадий Волков** (1927 – 2010) – чăвашсен паллă этнопедагогĕ.*

22 **Текст содержанийĕпе тӳр килекен предложенисен номерĕсене çырăр.**

1) Акамлăх – çĕнĕрен тухнă йăла.
2) Иккĕри-виççĕри хĕр ачасем пĕр-пĕринпе ĕмĕр туслă пулма сăмах татнă.
3) Акам пулас хĕрсем шыв юххине хăмла пăрахнă та каланă: „Хăмла шывра путсан пирĕн туслăх та шывпа юхтăр, пĕттĕр“.
4) Акамсем пĕр тĕрĕ тĕрленĕ, пĕр евĕр тутăр çыхнă, пĕрешкел кĕпе тăхăннă, тутăрне те пĕр евĕрех çавăрса çыхнă.
5) Акамсен хăйсем кăна туслă пулнă, вĕсен ачисем, ачисен ачисем пĕр-пĕринпе хутшăнман.

Хуравĕ: ____________________

23 **Хуравăн хăш вариантĕнче калани тĕрĕс? Тĕрĕс хурав номерĕсене çырăр.**

1) 9-мĕш предложение ăслав кĕввипе çырнă.
2) 20-мĕш предложение калав кĕввипе çырнă.
3) 3-мĕш предложение сăнлав кĕввипе çырнă.
4) 12-13мĕш предложенисем 11-мĕш предложенире каланине уçса параççĕ.
5) 23-32-мĕш предложенисене ăслав кĕввипе çырнă.

Хуравĕ: ____________________

24 **1-4-мĕш предложенисенчен «калаçса татăлни, пĕр чĕлхе тупни тата çавна çирĕплетекен документ» пĕлтерĕшлĕ сăмаха çырса илĕр.**

Хуравĕ: _____ ________________

25 **11-15-мĕш предложенисенчен хăшне умĕнчи предложенипе сăпат местоименийĕ çыхăнтарать? Предложени номерне çырăр.**

Хуравĕ: ____________________

22-25-мĕш ĕçсене туса тишкернĕ текст рецензийĕн сыпăкне вуласа тухăр. Ку сыпăкра текстăн чĕлхе уйрăмлăхĕсене тишкернĕ. Рецензи сыпăкĕнче хăш-пĕр терминсене сиктерсе хăварнă. А, Ă, Б, В, Г сас паллисем хыççăн скобкăра илсе панă тĕслĕхсене юрăхлă терминсен номерĕсене çырăр. Хуравсен 1-мĕш бланкĕнче 26-мĕш ĕç тĕлĕнче пĕрремĕш клеткăран пуçласа цифрăсен номерĕсене текстри йĕркепе килĕшӳллĕн запятойсемсĕр çырăр.

26 **Г. Волков хăйĕн текстĕнче (А) ________ (4-мĕш предложенире „патшалăх пуçлăхĕсем килĕшӳ тунă чухнехи пек“, 11-мĕш предложенире „пĕр тăван йĕкĕрешсем пек“, 22-мĕш предложенире „çырла çупкăмĕнчи пек“), (Ă) ________ (27-мĕш предложенире „тĕпренчĕкĕсем“), (Б) ________ (18-мĕш предложенире „çырлам“, „силĕм“) усă курнă. Шухăша тĕрĕс те сăнарлă кăтартма (В) ________(3-мĕш предложенире „сăмах тат“, 25-мĕш предложенире „чĕрере юл“) пулăшаççĕ. (Г) ________ (26-мĕш предложенире „çапла“)шухăша пĕтĕмлетме май парать.**

Терминсен списокĕ:
1) эпитет;
2) метафора;
3) фразеологизм;
4) кӳртĕм сăмах;
5) синекдоха;
6) танлаштару;
7) кăшкăрулла предложени;
8) литота;
9) синонимсем.

Хуравĕ: ____________________

1-26-мĕш ĕçсен хуравĕсене хуравсен 1-мĕш бланкне куçарса çырма ан манăр. Кашни ĕçĕн хуравĕ тĕрĕс номерпе тăнипе тăманнине тепĕр хут тĕрĕслĕр.

2-мĕш пай

Ку ĕçе хуравсен 2-мĕш бланкĕнче çырăр.

27 Вуланă текст тăрăх сочинени çырăр.

Текст авторĕ лартнă проблемăна çырса тата уçса парăр. Хăвăр шухăшăра вуланă текстри икĕ тĕслĕхпе (аргументпа) ĕнентрĕр (ытлашши цитатăланинчен асăрханăр). Кашни тĕслĕхех ăнлантарса парăр, вĕсем хушшинчи çыхăнăва палăртăр.

Текст авторĕн позицине çырса парăр. Текстра хускатнă проблема çине автор мĕнле пăхнине йышăнса е йышăнмасăр хăвăр шухăшăра хўтĕлĕр.

Сочинени калăпăшĕ 150 сăмахран кая пулмалла мар.

Вуланă текст çине таянмасăр çырнă сочинение хакламаççĕ. Енчен те эсир вуланă текста ним улăштармасăр çырса илетĕр пулсан ĕçĕре 0 балл лартса хаклаççĕ.

Сочинение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

Чăваш чĕлхипе çырнă экзамен ĕçĕсене хакласси

1-мĕш пай

1-7, 9-15, 17-25 ĕçсене тĕрĕс тусан шкул ачи кашни ĕçшĕн 1-ер балл илет. Хурав тĕрĕс пулмасан е вăл пачах пулмасан – 0 балл лартаççĕ.

16-мĕш ĕçе тунăшăн 0 балран пуçласа 2 балл таран лартма пултараççĕ. Тĕрĕс хураври пĕтĕм цифра пулсан тата урăх цифрăсем пĕрре те пулмасан – ĕçе 2 балл лартса хаклаççĕ. Тĕрĕс хураври пĕр цифра пулмасан е ун вырăнне урăх цифра пулсан – ĕçе 1 балл лартса хаклаççĕ.

8-мĕш ĕçе тунăшăн ача 0 балран пуçласа 5 балл таран илме пултарать: кашни тĕрĕс хуравшăн 1 балл лартаççĕ.

26-мĕш ĕçе тунăшăн 0 балран пуçласа 4 балл таран илме пулать. Тĕрĕс хураври пĕтĕм цифра пулсан тата урăх цифрăсем пĕрре те пулмасан – 4 балл лартаççĕ. Тĕрĕс хураври кашни цифрăшăн ача 1 илет.

Ĕç номерĕ	Тĕрĕс хурав
1	25<е>52
2	ăна
3	2
4	тĕрĕс
5	сăмсине
6	хушăнмасть
7	юлташăр
8	52413
9	135<е>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки
10	13<е>31
11	125<е>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки
12	24<е>42
13	25<е>52
14	145<е>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки
15	34<е>43
16	24<е>42
17	234<е>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки
18	13<е>31
19	23456<е>çак цифрăсен кирек мĕнле йĕрки
20	56<е>65
21	14<е>41
22	34<е>43
23	45<е>54
24	килĕшÿ
25	12
26	62934

2-мĕш пай

Текст ҫинчен информаци ҫырса пани*

Проблемăсем	Автор позицийĕ
1. «Туслăх» проблеми (Мĕн вăл туслăх? Туслăх мĕнре палăрать?)	Туслăх – пурнăҫра чи кирли, чи асли. Туссем яланах пĕрле, йывăр вăхăтра та вĕсем пĕр-пĕрне пулăшаҫҫĕ. Халăх туслăхпа хăватлă.
2. Акамлăхпа туслăх ҫыхăнăвĕн проблеми (Ҫын пурнăҫĕнче акам мĕнле вырăн йышăнать? Туслăхпа акамлăх пĕр-пĕринпе мĕнле ҫыхăннă?)	Акам пуласси – тахҫанхи йăла. Акамсем хăйсен туслăхне шыва хăмла, чул пăрахса ҫирĕплетнĕ. Акамсем пĕр-пĕрне пулăшнă, яланах пĕрле пулнă.
3. Чăваш халăхĕн пурнăҫĕнче туслăх мĕнле вырăн йышăннине палăртас проблема (Туслăх халăх пурнăҫĕнче мĕнле вырăн йышăнать?	Чăваш халахĕ авалтанпах туслă пулма пĕлнĕ. Ҫак халăх ачисене никам та нихăҫан та пайлаймĕ. Туслашас енĕпе авалхи мăн асаттесенчен юлмалла мар.
4. Акамлăхпа туслăх ҫине пăхас проблема (Акамлăхпа туслăх ҫине Г. Волков мĕнле пăхать? Унăн пултарулăхĕ вулакана мĕнле витĕм кӳрет?)	Акамлăхпа туслăха Г. Волков пысăка хурса хаклать. Унăн шучĕпе, пирĕн халăх авалтанпах туслă пурăнма пĕлнĕ. Этнопедагог пултарулăхĕ акмлăхпа туслăха хаклама, упрама вĕрентет.

*** Проблемăсене ача ҫырса панă лексика таблицăра кăтартнинчен уйрăлса тăма пултарать. Проблемăна вуланă текстран цитатăлама та юрать, текстри предложени номерне кăтартса ҫырма та пулать.**

Туллин хуравламалли ĕҫе хакламалли критерисем

№	27-мĕш ĕҫĕн хуравне хакламалли критерисем	Балсем
I	*Сочинени содержанийĕ*	
К1	**Вуланă текстра хусактнă проблемăсене ҫырса пани**	
	Вуланă текстра хускатнă проблемăсенчен пĕрне тĕрĕс ҫырса панă. Проблемăна ăнланнипе тата ăна ҫырса панипе ҫыхăннă факт йăнăшĕсем ҫук.	1
	Вуланă текстра хускатнă проблемăсенчен пĕрне те ҫырса паман. ***Вуланă текстра хускатнă проблемăсенчен пĕрне те ҫырса паман е йăнăш ҫырса панă пулсан ĕҫе К1-К4 критерисемпе 0 балл лартса хаклаҫҫĕ.**	0
К2	**Вуланă текстра хусактнă проблемăна ăнлантарса пани**	
	Хăй ҫырса панă проблемăна ача вуланă текст ҫине таянса ăнлантарса панă. Вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **2 тĕслĕхрен** кая мар илсе панă. Усă курнă 2 тĕслĕхе ăнлантарса панă, вĕсем хушшинчи ҫыхăнăва уҫса панă. Проблемăна ăнланнипе тата ăна ҫырса панипе ҫыхăннă факт йăнăшĕсем ăнлантарса панинче ҫук.	5
	Хăй ҫырса панă проблемăна ача вуланă текст ҫине таянса ăнлантарса панă. Вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **2 тĕслĕхрен** кая мар илсе панă. Усă курнă 2 тĕслĕхе ăнлантарса панă, **анчах** вĕсем хушшинчи ҫыхăнăва уҫса паман, **е** тĕслĕхсем хушшинчи ҫыхăнăва уҫса панă, **анчах** пĕр тĕслĕхе ҫеҫ ăнлантарса панă. Проблемăна ăнланнипе тата ăна ҫырса панипе ҫыхăннă факт йăнăшĕсем ăнлантарса панинче ҫук.	4
	Хăй ҫырса панă проблемăна ача вуланă текст ҫине таянса ăнлантарса панă. Вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **2 тĕслĕхрен** кая мар илсе панă, **анчах** усă курнă 1 тĕслĕхе ҫеҫ ăнлантарса панă, тĕслĕхсем хушшинчи ҫыхăнăва уҫса паман, **е** вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **1 тĕслĕх** илнĕ тата ăна ăнлантарса панă, **е** вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **2 тĕслĕх** илнĕ, анчах вĕсене ăнлантарса паман. Тĕслĕхсем хушшинчи ҫыхăнăва уҫса панă.	3

	Проблемăна ăнланнипе тата ăна çырса панипе çыхăннă факт йăнăшĕсем ăнлантарса панинче çук.	
	Вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **2 тĕслĕх** илсе панă, анчах вĕсене ăнлантарса паман. Тĕслĕхсем хушшинчи çыхăнăва уçса паман.	2
	Вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **1 тĕслĕх** илнĕ, **анчах** ăна ăнлантарса паман.	1
	Вуланă текстран проблемăна ăнланма кирлĕ **тĕслĕхсем** илсе паман, **е** проблемăна текст çине таянса ăнлантарса паман, **е** ăнлантарса панинче вуланă текстпа ăнланнипе çыхăннă факт йăнăшĕ(сем) пур, **е** çырса паман проблемăна ăнлантарса панă, **е** ăнлантарса парас вырăнне текстăн содержанине çырса панă, **е** ăнлантарса парас вырăнне текстăн пысăк пайне цитатăласа панă.	0
К3	**Текст авторĕн позицийĕ палăрни**	
	Ăнлантарса панă проблема пирки текст авторĕ мĕнле шухăшланине ача тĕрĕс кăтартса панă. Текст авторĕн позицине ăнланнипе çыхăннă факт йăнăшĕсем çук.	1
	Ăнлантарса панă проблема пирки текст авторĕ мĕнле шухăшланине ача тĕрĕс кăтартса паман, **е** текст авторĕн шухăшлавне ача çырса паман.	0
К4	**Шкул ачин позицийĕ палăрни**	
	Текст авторĕн позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине уçăмлă кăтартать.	1
	Текст авторĕсен позицине йышăнса е хăй шухăшне хӳтĕлесе шкул ачи хăйĕн позицине кăтартман, **е** шкул ачин позицийĕ проблемăна çырса панипе тӳр килмест, **е** ача хăй позицийĕ çинчен ячĕшĕн çеç *Эпĕ авторсемпе килĕшетĕп. Эпĕ авторсемпе килĕшместĕп* йышши предложенисем çырса çырлахать.	0
II	***Сочинение пуплев енчен йĕркелени***	
К5	**Шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни**	
	Ĕçре шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни палăрать: – логика йăнăшĕсем çук; шухăшсене йĕркипе уçса пынă; – текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук.	2
	Ĕçре шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни палăрать, **анчах** логика йăнăшĕ 1 пур, **тата /е** абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă.	1
	Ĕçре шухăш пĕр пĕтĕмлĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ тата шухăшсене йĕркипе уçса пыни сисĕнет, **анчах** логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, **тата/е** абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă.	0
К6	**Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ***	
	Ĕç пуплев тĕрĕслĕхĕпе тата уçăмлăхĕпе, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕсемпе усă курнипе палăрать. *** Ку критерипе чи пысăк балл К10 критерипе чи пысăк балл илсен кăна лартса парасçĕ.**	2
	Ĕç пуплев тĕрĕслĕхĕпе уçăмлăхĕ палăрать, **анчах** пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе усă курни сисĕнет, **е** ĕç тĕрлĕ грамматика хатĕрĕсемпе усă курнипе палăрать, **анчах** шухăша тĕрĕс те уçăмлăн уçса паман.	1
	Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курнă	0
III	***Тĕрĕс çырма пĕлни***	
К7	**Орфографи нормисене пăхăнни**	
	Орфографи йăнăшĕсем çук, е 1 пĕчĕк йăнăш пур	3
	1–2 йăнăш пур	2
	3–4 йăнăш пур	1
	5 е ытларах йăнăш пур	0
К8	**Пунктуаци нормисене пăхăнни**	
	Пунктуаци йăнăшĕсем çук, е 1 пĕчĕк йăнăш пур	3
	1–3 йăнăш пур	2
	4-5 йăнăш пур	1
	6 е ытларах йăнăш пур	0
К9	**Грамматика нормисене пăхăнни**	
	Грамматика йăнăшĕсем çук	2
	1-2 йăнăш пур	1
	3 е ытларах йăнăш пур	0
К10	**Пуплев нормисене тытса пыни**	